Шелепи Н.И. Чăваш шăпчăкĕ: [сăвă] / Н.И. Шелепи // сунтал. – 1940. - № 9. – С. 7.

*Н. И. ШЕЛЕБИ,*
*ЧАССР Халăх поэчĕ*

# ЧĂВАШ ШĂПЧĂКĔ

Чăваш Шăпчăкĕ Иванов,
Хастар чĕре,
Ĕмĕрех юрла, тăванăм,
Кĕрекере.

Санăн ятна ырă сунса,
Паян эпĕр
Тараватлăн уяв туса
Хисеплетпĕр.

Чаплă ĕçне сума-суса
Асăнатпăр,
Хĕрлĕ ялав айне тăрса
Пахалатпăр.

Юратнă халăх ывăлĕ,
Аслă сăвăçă,
Ирĕклĕхĕн çутă çăлĕ
Санăн ĕçӳ.

Путсĕр кулак лачакине
Путса пĕтнĕ
Сетнерпеле Нарспине
Эсĕ чĕртнĕ.

Мул тĕнчиллĕ имсĕр-сĕмсĕр
Саманара
Шăрантарнă эс вилĕмсĕр
Сăвă-юрра.

Паян мĕн пур халăх санпа
Мухтанатпăр,
Сана ăшă сăмахсемпе
Асăнатпăр.

Пĕтĕм чăваш сан ĕçӳпе
Хумханатпăр;
Совет Союз хăнисемпе
Уявлатпăр.

Патша тĕнчи чăвашсене
Сума-суман,
Санăн чаплă юррусене
Çут кун паман.

Халĕ санăн юррусем
Ялкăшаççĕ;
Тăван çĕршыв талккишĕпех
Янăраççĕ.

Тăван халăхăн ывăлĕ,
Хастар чĕре,
Юрру санăн ĕмĕр юлĕ
Кĕрекере.

Ĕнтĕ пирĕн юрăсем
Çĕнелчĕçĕ;
Сталинла симфонисем
Çĕнтерчĕçĕ.

Халь Сетнерпе Нарсписем
Савăнаççĕ,
Тулăх, ырă пурнăçпа
Пурăнаççĕ.

Ĕçхалăхне чи телейлĕ
Пурнăç патне
Ертсе пырать çĕнтерӳллĕн
Сталин атте.

24/VIII—40 ç.